## ЧӖРЕМ ПАЯН КӖЛЛЕНЧӖ...

**(П. П. Хусанкая пытарнӑ кун)**

Чӗрем паян кӗлленчӗ
Ҫурӑлса.
Ӑуҫна хупайрӑн, сӑвӑҫ,
Ҫунӑхса.

Утатӑп халӗ хурлӑн
Хыҫӑнтан.
Текех пӑхаймӑп ӗнтӗ
Ӑуҫунтан.

Чечек пырса хураҫҫӗ
Икпитсем.
Ална тытса чуптурӗҫ
Пилатсем.

Пире поэт каҫарӗ
Терӗҫ пуль.
Пире поэт пӗлмерӗ
Терӗҫ пуль...

Йӑлтах, йӑлтах пӗлетпӗр —
Ан пытар!
Чипер ята варласшӑн
Тӑкрӑн тар.

Поэт чунне хӑртасшӑн,
Виҫ пусла —
Элек-мелек эс ҫыртӑн
Хурахла.

Чунна санне тылларӗ —
Ӑӗвӗҫӳ.

Чӗрӳн куҫне хупларӗ —
Йӳҫӗхӳ.

Ӑурсан-тусан тайлаттӑн —
Ейӗлсе.
Хыҫне юлсан юнаттӑн —
Хирӗлсе.

Халь ак кунта тӑратӑн
Ӑаҫрӑлса.
Йӗрем пекки тӑватӑн
Савӑнса.

Мӗнле суя эс, путсӗр —
Фарисей!
Чӑтать сире паянлӑх
Ҫак тӗнчей...

...Чӗрем паян кӗлленчӗ
Ҫурӑлса.
Ӑуҫна хупайрӑн, сӑвӑҫ,
Ҫунӑхса.

Йӗрет чӑваш ӗҫҫынӗ
Пӗр чунтан.
Утать... Утать вӑл хурлӑн
Хыҫӑнтан.

1970